К 84.09(=Чув)
С 30
Ч-42756

Юрий Сементер

# ПАЙТУЛ

## Çичĕ çиçĕмлĕ юрă

Шупашкар – 2009

ПРОВЕРЕНО

Национальная библиотека ЧР
4-042756
Обязат экз.

УДК 894
ББК 84 Чув. 7-5
С 30

ЧР

Чăваш халăх поэчĕ Юрий Сементер çĕнĕ кĕнекине Степан Разин ертсе пынă аслă хресчен вăрçине хутшăннă, XVII ĕмĕрте пурăннă аслă та чаплă поэта, юрăçа – Пайтул пăлхавпуç-утамана халалласа çырнă. Кĕрешӳри паттăрлăхĕ, чыспа тивĕçĕ, юратăвĕ – акă çыравçа канăç паман ыйтусем.

ПРОВЕРЕНО
20 10 21 СЕН 2017
И-42756

© Ю. Сементер, 2009

НАЦИОНАЛЬНАЯ БИБЛИОТЕКА ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ

К84.09(=Чув)
С30



# ÇИЧЧĔ СĂВАПЛĂХНЕ ПУÇ ТАЙНИ

Çиччĕ – пирĕн чăвашăн чи сумлă хисепĕ:
Çич çырма, çичĕ ту, çичĕ пÿрт, çич тăван…
Несĕлсем умĕнче пуç таяс тетĕп эпĕ
Вĕсем çичĕ çăлтăр çулне тупнăран.

Ак атте, асатте, унăн ашшĕ, аслашшĕ…
Çичĕ сыпăк тăрать çĕн ăру умĕнче.
Раçăнпа пĕрле çапăçнă Шетмĕ чăвашĕ
Тĕрĕс тăтăр тесе çичĕ çиллĕ тĕнче.

Пăкачав элемне йăтнă унăн мăнукĕ,
Ун ачи вута кĕнĕ Кутузовпала,
Несĕл пуç! Мухтанма тивĕç пур-и ман, çук-и
Чăнлăх çулĕ енне ăнтăлан йăхпала?

Ача чух çимĕкчен çичĕ хут шыва кĕнĕ,
Улăхра татса çинĕ çич тĕслĕ кĕпçе,
Хутлама çич хут çиччĕ таран пĕлекенĕн
Ăсĕ ăнăçнă шут та хисеп ĕçĕнче.

Эп те ĕмĕрĕмре çич çырма урлă каçрăм,
Утнăçемĕн хăпартăм çич ту тăррине.
Хăлхара вĕçĕмех янăрарĕ çич ахрăм,
Яланах йыхăрса аслă çулваррине.

Асамат пĕккинче çичĕ тĕс йăрăмланчĕ,
Кашни çын шăпинчи чи телейлĕ тĕссем.
Вĕсенче – Турă панă кĕтретлĕх саманчĕ,
Вĕсенче – чăн илем те кăварлă хĕлхем.

Çиччĕре шкул юман алăкне уçса ячĕ,
Кил, ачам, терĕ, ирт, акă сан кĕнекÿ,
Пĕлÿпе – хăратаймĕ çич ют саламачĕ,
Урăх çул тупса утĕ килес инкекÿ.

Пĕлÿпе йăл кулса хирĕç тухĕ, ыталĕ
Çутçанталăк вăйне виçекен çич виçе,
Унĕ, туптĕ пире саманамăр сунталĕ
Куç шăрçи пек тытма чĕрери тивĕçе.

**Куç курни, шăрш пĕлни, сас илтни, ырă тусăм,**
**Этеме тăршшĕпех çавăтса пынă пек**
**Ху чысна упрани – пирĕн çиччĕмĕш туйăм, –**
**Вăл чунпа чĕрене хывтăр çĕнĕ тĕрек.**

**Такăнсан алă парĕ атте-анне пилĕ,**
**Йăнăшсассăн тÿрлетĕ пехиллĕ сăмах.**
**Хирĕçрен майлă çаврăнĕ çăлăнăç çилĕ,**
**Çавра чул пулса тăрĕ хĕвеллĕ ахах.**

**Эрнери çич кунран кашниех тус пек пулĕ,**
**Йышăн, тейĕ, манран пархатар парнине,**
**Ан каппай! Тыт асра мĕн ятпа хĕпĕртÿллĕ**
**Вырсарни çемçе вырăн сарса панине.**

**Тыт, тăванăм, асра: йĕп вĕç пек çитĕнÿ те**
**Кĕрешÿсĕр килмест пурăнан пурнăçра,**
**Пĕлмесессĕн майне – эсĕ мелсĕррĕн ÿкĕн**
**Е малта вĕçес чух шăппăн пырăн хыçра.**

**Тăтăшах çичĕ хут такăнсан – ăнланмаççĕ,**
**Шел, çаплах тупайман теççĕ ху вырăнна.**
**Ват çÿреншĕн тăхаллă йĕвен тутармаççĕ,**
**Кив йĕнерĕн пулмасть йăлтăркка ярана.**

**Пĕл çакна: сасăсен ретĕнчи çичĕ нота**
**Ахаль мар çаврăнать пĕр хитре çаврана.**
**Çич саспа çырăнать чаплă опера, ода,**
**Пĕтĕм кĕвĕ йĕрки çич саспа çырăнать.**

**Гаммăпа тĕнчене ыталать Федор Павлов,**
**Юрату анлăшне те унпах вăл виçет.**
**Çич сасра чун нуши те, телейĕ те паллă:**
**Генисен венчетне гени çеç тивĕçет.**

**Çав асамлăхпала çич çĕр-сакăр çĕр юрă**
**Шăрантарчĕ Лукинăмăр хăй ĕмринче,**
**Ун сасси хĕм-прелюдин, ирхи увертюрăн**
**Янрĕ çĕн ăстасен ÿнер çулĕ çинче.**

**Çиччĕ!**
**Эс чĕрери вăрттăн кĕлĕ сăмахĕ,**
**Кĕр те кĕр тÿпери проroксенĕн палли,**
**Ăшĕ вĕçнĕ поэтăн Пегас урхамахĕ,**
**Касиччен çичĕ хут виçмелли япали.**

**Несĕлсемĕр пире ахаль мар-тăр каланă:**
**Çичĕ хурăн касма çичĕ пуртă ан ил.**
**Меслетне тĕшмĕртсе ĕçлеме пуçлаканăн**
**Пуçри шухăшĕ пулĕ çӳлти аслă пил.**

**Шанăçпа ĕненӳн шăрансам-и эс, çиччĕçĕм,**
**Пиллĕксен, улттăсен лайăх пиччĕшĕ пул,**
**Сан ятун, хисепӳн пархатарĕ те çивчĕшĕ**
**Саккăр-тăххăршăн пултăр çич шăнăрлă хул.**

**Яш чухне çиччĕлле явнă капăр йĕвен те**
**Вăхăтчен ан кайинччĕ ыр ут пуçĕнчен,**
**Пĕр килте ӳснĕ çичĕ кĕреш тăвансен те**
**Уйрăлма ан тивинччĕ йĕс чан çапиччен.**

**Çич халпа çичĕ сăрт тӳпинчи Шупашкар та**
**Малаллах сулăмлаттăр утас утăмне,**
**Çӳлелле çĕкленсе пусăм-пусăмăн, картăн**
**Çĕн шайпа çирĕплеттĕр чăваш тытăмне.**

**Çичĕ вăрттăнлăхра – Турă çырнă туллилĕх,**
**Унăн ирĕкĕнчен ан тухсам эс, ан чак,**
**Пиллĕхпе пурăнсан ĕмĕр кӳрĕ ăшпиллĕх**
**Çитмĕл çич пĕрчĕри çитмĕл çичĕ пучах.**

**Тăвансем!**
**Çак кĕвве ахаль мар эп пуçартăм,**
**Çичĕ çул çак сăмах çаврăнать пусăмра.**
**Чанĕ çапрĕ, вĕçме çирĕпленчĕ çунатăм,**
**Çич хут виç, пĕрре кас –**
**Мĕн кирли – йăлт умра.**

**...Трак музейĕ.**
**Салам, хамăр ен Колизейĕ!**
**Акă мамонт шăмми. Ал арманĕ. Чăпта.**
**Ак стрипалĕ, хĕççи... Астăвап, йĕп ачийĕ, –**
**Çав ĕçпе çĕлĕк илнĕччĕ эп хам ята.**

**Тăрăнсем, уписем никĕсленĕ аваллăх,**
**Тăшманпа çапăçса вăй туптанă тавра.**
**Сăнаса, тĕпчесе, тишкĕрсе хак памалăх**
**Экспоначĕ çителĕклĕ ку куравра.**

**Каç килетчĕ.**
**Кĕрхи тĕксĕм питлĕ йĕпхӳлĕх**

Хыпӑнатчӗ карасшӑн хура чаршавне.
Ӗнтрӗкпе ӗнтӗркенӗ ҫуртри сентре-ҫӳлӗк
Майӗпен пытаратчӗ истори сӑнне.

Телефон патӗнчеччӗ-ши пирӗн музейҫӗ
Е такам ыйтупа тытса чарнӑ ӑна,
Эпӗ ҫав самантра ҫав залра пӗчченехчӗ, –
Йӑл та йӑл ҫиҫнӗ ҫиҫӗм пӗҫертрӗ мана.

Мӗн ҫиҫет ку?
Пӑхап – ҫутӑ кантӑк витрина.
Ӑшӗнче – кукӑр пуҫлӑ ҫип-ҫивӗчӗ хӗҫ.
Йӗннине юриех ал ҫыххи витӗр илнӗ:
Калӑн, иккӗш калаҫҫӗ халь: «Пирӗн – пӗр ӗҫ».

Аялта – ҫавракa ҫырупа ҫавӑрттарнӑ:
«Пирӗн чаплӑ ентеш Пайтул паттӑр хӗҫҫи».
Тӗттӗме сивлесе хӑйне хӑй вут хыптарнӑн
Ҫичӗ хут ҫиҫрӗ хӗҫ, ҫиҫрӗ унӑн тӗнчи.

Ҫав тӗнче ҫиҫӗмне эп букварь пек вуларӑм,
Паспорт пек, документ пек вуларӑм вӑр-вар.
Ҫичӗ хӗм ҫутипе ҫамкана тухрӗ тарӑм,
Куҫ ҫути, ҫиҫӗм евӗр, вылярӗ чӑл-пар.

Ҫичӗ ҫиҫӗм мана кинори пек куҫарчӗ
Несӗлри ҫичӗ сыпӑк хушши каялла,
Тахҫанхи пурнӑҫа чӗррӗн-сыввӑн кӑларчӗ
Харӑс, пӗр самантра пӗтӗмпех курмалла.

Ак мӗнре ҫиччӗсен тухатулӑх кӗтречӗ,
Акӑ мӗншӗн ҫичче пит уять-мӗн чӑваш.
Тав сана, аслӑ астӑвӑм ҫиҫӗмӗн речӗ,
Эс паян – юмахри пулӑмпа ал ылмаш.

Ҫирӗм пӗрмӗш текен ӗмӗрти тӑвансемӗр,
Халь сире ҫиҫӗмре мӗн курнин тахатне
Хам ӑнланнӑ таран пӗлтерем, итлесемӗр,
Куҫ умне кӑларсамӑр Пайтул вӑхӑтне.

* * *

## ПĔРРЕМĔШ ÇИÇĔМ

*Ай-хай çиçĕм ялтрарĕ,*
*Вутлă çиçĕм ялтрарĕ.*
*Вутлă çиçĕм ялтрамарĕ,*
*Пайтул хĕçĕ ялтрарĕ,*
*Пире çапла каларĕ.*

**Виçĕ ĕмĕр çурăсем**
**Каяллахи вăхăтра**
**Çавалсем те Шетмĕсем,**
**Сурăмсем те Хирлепсем,**
**Ункăсем те Юнкăсем,**
**Энĕшсемпе Йĕршшусем**
**Юхса выртан тăрăхра**
**Тар юхтаран тарçăсем**
**Чăвашсем те çармăссем,**
**Ирçесем те мăкшăсем,**
**Тутарсем те ырăссем**
**Вăрманçăсем, хиртексем**
**Лашисене утланса,**
**Ухăпа кăралланса,**
**Çивчĕ айпăлта йăтса**
**Тимĕр сенĕксем илсе,**
**Хĕç, çĕмрен тавраш чиксе**
**Карай енне васкаççĕ.**

**Карай енне васкаççĕ,**
**Çĕнĕ юрă юрлаççĕ,**
**Çĕнĕ юрă юрлаççĕ,**
**Пĕр харăссăн калаççĕ:**

**Тани шывĕ хĕрринчен**
**Атăл атте хĕррине**
**Раçăн патша килет, тет,**
**Пирĕн пек çук çынсене**
**Ĕçме-çиме парать, тет,**
**Ĕçме-çиме парать, тет.**

**Тани шывĕ хĕрринчен**
**Атăл атте хĕррине**
**Раçăн патша килет, тет,**
**Пирĕн пек çук çынсене**
**Хăйĕн çарне илет, тет,**
**Хăйĕн çарне илет, тет.**

**Тани шывӗ хӗрринчен**
**Атӑл атте хӗррине**
**Раҫӑн патша килет, тет,**
**Пуян тӳре-шарана**
**Шыва яма чӗнет, тет,**
**Шыва яма чӗнет, тет…**

**Сурӑм шывӗ хӗррине**
**Карай ялӗ ҫывӑхне**
**Хура халӑх пухӑнать,**
**Пӗр йӗркене пӑхӑнать.**
**Йыш варринче – ҫамрӑксkер,**
**Яштакскер, тӗреклӗскер.**
**Куҫӗ ҫиҫет кӑвар пек,**
**Сасси янрать шӑнкрав пек.**
**Ку ӗнтӗ вӑл, пӗлсемӗр, –**
**Карай каччи Ахтимӗр.**
**Килсе ҫитен йӗкӗтсем**
**Йӗркеленсе тӑнаҫем**
**Ӑна евит тӑваҫҫӗ,**
**Черечӗпе калаҫҫӗ:**
**– Эпӗр Нурӑс енчисем,**
**Сакӑрвуннӑн килтӗмӗр…**

**– Эпӗр, Упи ҫыннисем,**
**Тӑхӑрвуннӑн ҫитрӗмӗр…**

**– Яманаксем пулатпӑр,**
**Пайтул ретне тӑратпӑр,**
**Пӗтӗм харам пырсене**
**Хӑлха чикки паратпӑр…**

**– Юнтапа тӑрӑхӗнчен**
**Эпӗр – ҫитмӗл ҫичӗ яш,**
**Чӑнлӑх ҫулӗпе ҫӳрен**
**Ҫитмӗл ҫич патвар чӑваш…**

**– Эпӗ – Шетмӗ хӗрринчен,**
**Ятӑмпа тесен – Ӳсек,**
**Вунӑ ял ячӗпелен**
**Йӗркелерӗмӗр кӳсек.**
**Утмӑл тӑххӑрӑн эпир,**
**Утмӑл тӑхӑр кӑрнатир.**
**Халӑх ӗҫӗшӗн тӑма**
**Пехил илсе килтӗмӗр,**

**Чăнлăхшăн пуçа хума**
**Чĕнет пире пилĕмĕр.**
**Хĕрĕх хĕсмет хĕснĕ чух,**
**Пуян пусмăрланă чух,**
**Тӳресем тустарнă чух**
**Сывлама та сывлăш çук.**
**Хĕвел ăшши – пуриншĕн,**
**Уйăх çути – пуриншĕн,**
**Çĕрсем, шывсем – пуриншĕн**
**Пулччăр тетпĕр малашне.**
**Хирсене, çарансене,**
**Хальхи шайпа виçмелле,**
**Куштан-пуян пурлăхне**
**Халăха валеçмелле,**
**Мĕншĕн тесен хуçасем**
**Пирĕн шутпа пуяççĕ,**
**Вĕççĕр-хĕрсĕр пуйнăçем**
**Çук çын мăйне пăваççĕ.**
**Хĕн пурнăçпа ӳсрĕмĕр,**
**Темĕн те пĕр тӳсрĕмĕр,**
**Тек çитет асапланса,**
**Ак тухрăмăр тапранса.**
**Мухтав Раçăн патшана –**
**Тĕрĕслĕхшĕн вăл тăрать,**
**Руç çĕрĕнчи пур çынна**
**Ирĕк пурăнăç парать.**
**Халăх çарне шетмĕсем**
**Çĕр пӳ пулса кĕресшĕн,**
**Вăрманкассем, шупуççем,**
**Çĕньялсем те танăшсем,**
**Кăмакалсем, пшонкăсем**
**Улпут тирне сĕвесшĕн.**

**Ӳсек хыççăн тăрăнсем**
**Раçăн çарне çырăнчĕç,**
**Тусайсем те алманчсем,**
**Чутайсем те шăматсем,**
**Элĕксем те нурăссем,**
**Явăшсем те кăмашсем,**
**Кӳлхĕррисем, упнерсем,**
**Унтан упакассисем,**
**Каçалсем, патăръелсем,**
**Ытти ен маттурĕсем**
**Хастар йыша хутшăнчĕç,**
**Маттур йăха çаврăнчĕç.**

**Акӑ ӗнтӗ майӗпен**
**Карай енче каҫ пулать,**
**Ҫӗршер кӑвайт ҫутипе**
**Пӗтӗм тавра ялтӑрать.**
**Сурӑм шывӗн сӑнӗнче**
**Ҫунать вучах ҫутисем,**
**Ҫӳл тӳпемӗр айӗнче**
**Хӗмленеҫҫӗ ҫӑлтӑрсем.**

**Пиншер ҫын сассипеле**
**Улӑх тӑрать кӗрлесе,**
**Ҫӑлтӑр ҫарӗ ҫӗрпеле**
**Кайнӑ тейӗн пӗрлешсе.**

**Ҫывӑхрах шӳтлет такам,**
**Такмакласа калаҫать:**
**– Ҫутӑ уйӑх – йӗс такан**
**Кӗҫӗр манпа тытӑҫать.**

**Кам таканӗ ҫав такан?**
**Мӑйракаллӑ аҫтахан.**
**Мӑйракаллӑ аҫтахан мар,**
**Мускаври пӑрҫа патшан.**

**Патшине тытас килет,**
**Аттине хывас килет,**
**Аттинчи йӗс таканне**
**Ҫурмалла хуҫас килет.**

**Йӗс таканӗн хуҫине**
**Кутӗнчен тапас килет,**
**Хӑвӑртрах ун вырӑнне**
**Раҫӑна лартас килет.**

**Такмака итлекенсем**
**Ҫӗр чӗтретсе кулаҫҫӗ:**
**– Хамӑр тӑрӑхра та, тем,**
**Халапҫӑсем пулаҫҫӗ.**

**– Чуллӑсем вӑл. Исемпек.**
**Кӗсле купӑс та калать,**
**Юррипе, сӑввисемпе**
**Халӑха савӑнтарать.**

**Çепĕç кĕвви-çеммипе**
**Самантрах çĕклет чуна,**
**Çивчĕ шухăш хĕмĕпе**
**Куç пăвать çĕршер çынна.**

**Халапра та юмахра**
**Вăхăт пĕлĕт пек шăвать,**
**Акă ĕнтĕ улăхра**
**Ирхи сасă ян каять.**

**– Эй, кăйкăрсем, тăвансем!**
**Салтакла йĕркеленер,**
**Çапрĕç пушар чанĕсем,**
**Пайтула кĕтсе илер.**

**Пайтул Раçăн патĕнче**
**Ирĕклĕхшĕн кĕрешнĕ,**
**Курнă тĕрлĕрен тĕнче,**
**Тĕрлĕ çынпа пĕрлешнĕ.**

**Аçтăрханăн вăйпутне**
**Чиркӳ çинчен ыватнă,**
**Чар хулин мăн хапхине**
**Питлĕх евĕр хăйпăтнă.**

**Унталла та кунталла**
**Атăл хумне хумхатнă,**
**Пур çĕрте те усала**
**Тымарĕпе аркатнă.**

**Сар ту пуянĕсене**
**Кăкĕпелех вăтăрнă,**
**Самарти хуçасене**
**Ĕнтнĕ, хырнă, сăтăрнă.**

**Пирĕн Пайтул кашнинчех**
**Пĕрле пулнă Раçăнпа,**
**Ĕнтĕ вăл тăван пекех**
**Хамăр çĕнĕ патшапа.**

**Çтаппан Тимофейччăпа,**
**Пĕтĕм хресчен патшипе,**
**Халь çӳреççĕ пĕр çулпа**
**Атăл атте хĕррипе.**

**Раҫӑн пире, тӑвансем,**
**Хӑтарасшӑн пусмӑртан,**
**Ӗҫпеле пурнан ҫынсем**
**Пурте пулччӑр, тет, пӗр тан.**

**Тек ан иртӗнччӗр паяр,**
**Вӑйпутпа улпут, купса,**
**Эпӗр чӗртнӗ вут-кӑвар**
**Илтӗр тавраллах хыпса.**

**Вырӑнти куштансене**
**Эсир халӗ кӑкларӑр,**
**Илтсе Раҫӑн йыхравне**
**Пирӗн патаваскарӑр.**

**Кӗҫех Раҫӑн патӗнчен**
**Пайтул килсе ҫитмелле,**
**Ыранхи ӗҫ-пуҫ ҫинчен**
**Вӑл пире пӗлтермелле.**

**Халӗ ӗнтӗ, тӑвансем,**
**Хампала паллаштарам:**
**Эп – Ахтимӗр. Карайсем.**
**Пайтулпа мӗн ачаран**
**Сурӑм шывӗ хӗрринче**
**Йӗкӗреш пек ӳсрӗмӗр,**
**Пӗчӗкрен ҫурӑм ҫинче**
**Купаланчӗ тертӗмӗр.**
**Тӗрлӗ пуян патӗнче**
**Пилӗк-ҫурӑм аврӑмӑр,**
**Выҫҫине те куртӑмӑр,**
**Мӑшкӑлне те чӑтрӑмӑр.**

**Ыррине, лайӑххине**
**Ниҫта та тупмарӑмӑр,**
**Ӗҫшӗн хисепленине**
**Шел те – курраймарӑмӑр.**

**Ҫӗрӗн-кунӗн тар тӑкса**
**Нуша лавне туртрӑмӑр,**
**Юлашкинчен, тарӑхса,**
**Алла пӑшал тытрӑмӑр.**

**Пайтул, Атӑлпа кайса**
**Раҫӑнпала пӗрлешрӗ,**
**Арӑслан пек ҫапӑҫса**
**Паттӑр ятне тивӗҫрӗ.**

**Халь полковник чинĕпе**
**Йĕркелет чăваш çарне,**
**Кĕç тăратпăр сирĕнпе**
**Ун ялавĕсем айне...**

**Çав самантра ту енчен,**
**Çывăхри мăн çул çинчен**
**Вирхĕнен юлан утсен**
**Тăпăр-тăпăр сассисем**

**Уççăн кайрĕç илтĕнсе.**
**– Ку Пайтул...Сăмах çинчех**
**Акă çитрĕçĕ килсе.**
**Лайăх ... Татăлнă пекех...**

**Чи малта, йыш умĕнче,**
**Тĕтре тĕслĕ паттăр ут,**
**Лараканĕ ун çинче –**
**Калăн – çулăм, калăн – вут,**

**Хĕрлĕ пурçăн юпăнчи**
**Вĕлкĕшсе пырать вĕл-вĕл,**
**Ку этем, çар пуçĕнчи,**
**Калăн, хăй те чăн хĕвел.**

**Йăлтăркка урхамахне**
**Юмахри пек темелле,**
**Хăмăр куçлă йĕкĕтне**
**Улăп паттăр темелле.**

**Чĕлпĕр çинчи тăхисем**
**Чăнкăр-чăнкăр тăваççĕ,**
**Шурă çилхин кăтрисем**
**Çилпе вĕçсе пыраççĕ.**

**Учĕ хуçин кăмăлне**
**Туйса тăрать пулмалла,**
**Хуçи учĕн талайне**
**Чунпа сисет пулмалла.**

**Иккĕшийĕн чĕрисем**
**Пĕр пек тапнăн туйăнать,**
**Пуçĕнчи шухăшĕсем**
**Пĕр хĕм сапнăн туйăнать.**

**Кунашкал утаманпа**
**Мĕншĕн пĕрле тăрас мар,**
**Халăх майлă паттăрпа**
**Мĕншĕн паттăр пулас мар?**

**Хўхĕм йĕкĕт улăхра**
**Ахтимĕрпе танлашсан**
**Сасă кайрĕ таврара**
**Аслати пекех ян-ян:**

**– Мухтав Пайтул патăра-а-а!**
**– Расăн çумне – утăръя-а-а!**

**Ку сăмахсене илтсен**
**Каччă ылтăн йĕнĕрен**
**Çутă хĕçне кăларса,**
**Ярана çине тăрса**

**Çĕклерĕ те вирелле –**
**Улăхалла, хирелле**
**Сасă кайрĕ йĕтрелле**
**Пĕтĕм нукер илтмелле:**

**– Çак хĕç, туссем-тăвансем,**
**Раçăн патшамăр парни,**
**Ятарласа чăвашсен**
**Ячĕпеле туптани.**

**Унпала мĕн тумалла?**
**Унпала пур усала,**
**Пĕтĕм тĕрĕсмарлăха,**
**Пусмăрпа ултавлăха**
**Касмалла, вакламалла,**
**Çунтарса кĕл тумалла.**

**Ан тив, чăваш çĕрĕнче**
**Хĕн-хур тени ан пултăр,**
**Ан тив, чăваш çĕрĕнче**
**Асап-нуша ан юлтăр.**

**Хамăр таса кăралпа**
**Пуянсене тĕп тăвар,**
**Вара таса кăмăлпа**
**Килĕмĕре таврăнар.**

**Пирĕн халь мĕн тумалла?**
**Çирĕп чукмар пулмалла,**
**Тăшман пуçне унпала**
**Çапмалла та çурмалла.**

**Ĕнтĕ халĕ, тăвансем,**
**Чар хулине илтĕмĕр,**
**Аçтăрханти пуянсен**
**Хура çулне пӳлтĕмĕр,**

**Сартусемпе самарсем**
**Раçăн çарĕн аллинче,**
**Атăл çинчи халăхсем**
**Раçăн шухăшĕ енче.**

**Кĕç илетпĕр Чĕмпĕре,**
**Хусана çул тытатпăр,**
**Чулхула кĕтет пире,**
**Ун алăкне уçатпăр,**

**Кайран вара пур йышпа**
**Мускавалла тапатпăр,**
**Хамăр лартнă патшапа**
**Çĕнĕ пурнăç тăватпăр.**

**Халĕ вара кăйкăрсем,**
**Чĕмпĕрелле çул тытар,**
**Чыслă юхăма кĕрсе**
**Хамăр вали çул уçар.**

**Сурăм кĕрет Çавала,**
**Çавал кĕрет Атăла,**
**Çапла мăн шыв, вăй пухса,**
**Пĕрмай пырать сарăлса.**

**Çавăн пекех эпир те**
**Пĕр чăмăра пухăнар,**
**Тăшман пуçне Чĕмпĕрте**
**Мур çырмине пăрахар.**

**...Халăх çарĕ Карайран**
**Нурăсалла çул тытать,**
**Хапăсран иртсен, кайран,**
**Юхманалла талпăнать.**

**Малта – Шăмăршă, Улхаш,**
**Ват йăмраллă Тимĕрçен…**
**Çĕрӳ пысăк та, чăваш,**
**Ăрăскалу çук иккен.**

*** * ***

## ИККĔМĔШ ÇИÇĔМ

***Разин патĕнче чăвашран тухнă вуншар полковник, утаман, есаул, прапорщик пулни паллă. Тĕслĕхрен, Çĕрпӳ уесне кĕрекен Хуракасси /Карайкасси/ ялĕнчи Пайтул Искеев полковник тата унăн утаманĕ Çĕрпӳ уесĕнчи Искей /Янтуш/ ялĕн çынни Тутимĕр Ямайтин...***

***Чăваш АССР-ĕн историйĕнчен***

**Вăшăлах та вăшăл çил вĕрет,**
**Уйран уя вăйкăнса çӳрет.**
**Çарсем куçать Чĕмпĕр еннелле, –**
**Чĕн вылякан çĕре çитмелле.**
**Раçăн çарĕ пĕр çулпа васкать,**
**Унталлах Пайтул та ăнтăлать,**
**Малтан çирĕп сăмах татнă май**
**Çывăхарать Тутимĕр Ямай...**
**Чĕмпĕр хапхине уçаççĕ ĕнтĕ**
**Патша янă Парятти кнеçсем те:**
**Пĕр вăйпучĕ – Юрий Борятинский,**
**Даниилĕ – тепĕр Борятинский,**
**Пулккисем – утли те, çуранни те**
**Пуçĕпех хĕçпăшалланнă питĕ.**
**Хӳтĕлеме патша йĕркине**
**Вĕсем килнĕ Атăл хĕррине.**

**Васкар мар, хисеплĕ вулакан,**
**Такăнма пултарĕ васкакан.**
**Тен, Пайтул чунне кĕрсе курар,**
**Çула май унпа кăшт паллашар?**

**Шуррăн-хĕрлĕн çутăлать ав тул,**
**Пысăк шухăшпа пырать Пайтул:**
**Раçăн утаман шанать ăна,**
**Чыслăн пулăшса пыракана.**
**Йĕкĕт хисеплет ун шанăçне,**
**Чĕререн тăвать мĕн хушнине,**
**Кисретме тискер чуралăха**
**Вăл çĕклерĕ пĕтĕм халăха...**

**«Чĕмпĕре эпир илетпĕрех,**
**Хусанта та çĕнтеретпĕрех,**
**Пусмăрçа мĕнле пуç памалла?**
**Ун пуçне çапса аркатмалла...»**

Ч-42456
НАЦИОНАЛЬНАЯ БИБЛИОТЕКА ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ

**Кун пирки пулман иккĕленӳ:
Кĕрешӳ Пайтулшăн – киленӳ!
Çиçĕм пек хĕрӳ Хăлат айра,
Раçăн панă çивчĕ хĕç алра.**

**Пушă вăхăт тупăнсассăнах
Шăранать чунра тăван сăмах,
Эй, чăваш сăвви, чăваш юрри,
Пур-ши тĕнчере санран ырри?**

**«Пĕтĕм кăмăл – туйăма, ăса
Çĕклекенĕ эсĕ, Минисса,
Эсĕ маншăн – тӳпери хĕвел,
Эсĕ маншăн – шур пӳртри тĕпел.**

**Çĕнтерер те йывăр пусмăра –
Хăтлă пурнăç тăвăпăр вара,
Эпĕ иртмĕп сан сăмаххунтан,
Эсĕ тухмăн манăн кăмăлтан,**

**Мăшăр кăвакарчăн пек савса
Пурнăпăр чун ăшшине туйса,
Çавă пулĕ пирĕн хал-хавал,
Çавă пулĕ пирĕн ăрăскал…»**

**Минисса, çăп-çăмăл пăрчăкан,
Çавал шывĕ хĕрринчи ялтан.
Сăнĕпе вăл – хӳхĕм кĕлчечек,
Сассипе вăл – сарă кайăк пек.**

**Ӳснĕ пĕчĕкрен çĕр ĕçĕпе,
Пĕчĕклех туслашнă тĕрĕпе,
Сас параççĕ тейĕн, эй, тĕнче,
Кайăксем ун алшăлли çинче.**

**Асилет Пайтул хăй савнине
Чи пĕрремĕш хут тĕл пулнине.
Уйрăла пĕлми Хăлачĕпе
Вăл пыратчĕ улăх çулĕпе.**

**Улăх çулĕ – вĕтĕр-вĕтĕркке,
Ăнтăлать хĕвеллĕ ирĕке,
Курăксен асамлă çеçкисем
Ик енчен сапаççĕ хĕр-хĕлхем.**

Чарӑнчӗ те утакан Хӑлат
Ҫаврӑнса тинкерчӗ Пайтула.
Кур-ха: сукмакпа килет пике –
Улӑхри хитре чечек пекех.

Анчӗ каччӑ. Пычӗ хӗр умне.
Тайрӗ каччӑ тайӑлман пуҫне.
Ӑшӗнче каларӗ: «Эсӗ – ман,
Сан пекки курман эп урӑхран.»

Илтнӗ Минисса Пайтул ҫинчен
Пуянсен куштан ачисенчен:
«Хура пыр ҫулӗ ҫинчи хурах
Ашкӑнса ҫӳрейӗ-ши вӑрах?»

Хӗр пӑхать те каччӑ куҫӗнчен –
Хӑрушши пачах та ҫук иккен:
Чунӗ уяр кун пекех таса,
Иксӗлми ҫӑлкуҫ тӑрать тапса!

Каччӑ та сӑнать Миниссана.
Мӗнпе танлаштарӑн ку сӑна?
Нимӗнпе танлаштарма та ҫук
Чӗрере сар ҫу шӑраннӑ чух.

Иртсе кайрӗ унтанпа виҫ ҫул.
Ӗнтӗ халь Миниссапа Пайтул
Пулса тӑчӗҫ ик ҫынран пӗрре:
Пӗр вӑй-хал, пӗр шухӑш, пӗр чӗре.

Чӗмпӗре илсен, Улатӑра,
Хамӑр Ҫӗрпӳпе Шупашкара
Хӑтарсан пуян йӑлмакӗнчен
Туй туса пӗрлешмелле вӗсен…

«Ӗмӗтӗм, телейӗм, Минисса,
Ҫумӑмри ҫунатӑм, Минисса,
Шанчӑкӑм, тӗрекӗм, Минисса,
Ҫӑлтӑрӑм, хӗвелӗм, Минисса…

Ҫӑлтӑр та, хӗвел те тӳпере,
Эсӗ, Миниссаҫӑм, чӗрере,
Нимӗнле хӑват та тӗнчере
Уйӑраймӗ ӳлӗмрен пире…»

**Чим-ха…Уйăраймĕ, тенĕрен,**
**Эпĕ инçетре çӳренĕрен,**
**Муллă та укçаллă çичĕ ют**
**Савние куç хыврĕ çичĕ хут.**

**Халь те асăмрах пĕрин мĕлки:**
**Кĕрекаç пуянĕ Элекки**
**Сĕннĕ кĕмĕлне те ылтăнне,**
**Йăтнă пушмакне те аттине.**

**Хĕр ăна хăй çывăхне яман,**
**Услапа сăмах хушма паман.**
**Урнă, шăл хăйранă Элекки,**
**Çарала пуçланă ун лĕпки.**

**Ним тума пĕлмен енне вара**
**Элекки пĕр каç тухать вăрра,**
**Ырлăх-пурлăх кирлĕ мар ăна,**
**Çаклатасшăн вăл Миниссана.**

**Хăйĕн чаплă ăйăрне кӳлсе,**
**Икĕ чăрсăр çамрăка чĕнсе**
**Упие, Миниссасен ялне,**
**Вăрттăн çул тытать вăл каçхине.**

**Çӳл ту çинче вăйă çаврăнать,**
**Çавал тăрăх юрă ян каять.**
**Юрă пуçлаканĕ кам сасси?**
**Камăн пултăр? Минисса сасси.**

**Эх сасси те…Ылтăн чăмрашки…**
**Шăрантăрах…Кĕçĕр – юлашки.**
**Манăн арăм эсĕ малашне,**
**Савăнтарăн манăн чĕрене.**

**Çавăн пек шутланă Элекки**
**Çавал евĕр юхнă май екки.**
**Акă хăпараççĕ тăвалла**
**Ыран хуннĕм ялĕ тес яла.**

**Элекки пĕлет Пайтул çинчен,**
**Анчах халь, тет, вăл хурах инçе.**
**Кин пулса тăрсассăн Минисса**
**Пайтул тупĕ пĕр-пĕр Анисса.**

Майӗпелен вӑйӑ саланать,
Элекки эшкерӗ пытанать.
Акӑ сикрӗ – тухрӗ ик сӑпса,
Ҫатӑрларӗ, – лекрӗ Минисса.

Лав вӗҫтерчӗ Кӗрекаҫ енне.
Хӗр ӑнланчӗ хӗрӗн инкекне.
Пурпӗрех кайман вӑл ҫухалса,
Пурпӗрех тӑн тытнӑ Минисса.

Хирӗҫмесӗр, шӑппӑн, майӗпен
Вӑл пырать мехелӗ ҫитиччен,
Ӳсӗрсем кӑшт тимлӗх ҫухатсан
Хускалать ҫӳлевӗҫпе пӗр тан.

Ларкӑҫӗ ҫинче ларса пыран
Хусахне тӗртет те пур вӑйран –
Леш кӗрет ӳкет лаша хыҫне,
Тӗнӗл ҫаптарать ун ҫамкине.

– Тӑр-р-р, – тет ӑйӑрне хай Элекки,
Лав ҫинчен анать ун хӳрешки,
Иккӗш тытӑнаҫҫӗ ҫӗклеме
Ямшӑкра шар курнӑ этеме.

Каҫхи ҫил пулать те Минисса –
Вӗҫтере парать ҫунат хушса.
«Тавтапуҫ, – тет ӑссӑн Пайтулне, –
Эс кӑтартрӑн ҫӑлӑнӑҫ ҫулне».

Кӑштахран, Пайтул киле килсен,
Элеккин хӑтланӑвне пӗлсен
Улӑхра тӗл пулчӗ те ӑна –
Лешӗн – чунӗ тухманни кӑна.

Унтанпа вара Пайтул тесен
Шӑп ҫӳрет вӑл шӑпчӑк чӗппинчен.
Тарӑху ларать ун ӑшӗнче,
Кашкӑр кусӗ евӗр кусӗнче.

Миниссаҫӑм, чунӑм, тет Пайтул,
Маншӑн тепӗр ҫӗнӗ юрӑ пул,
Туйӑм кӑварланнӑ вӑхӑтра
Шӑратса хурар-ха ҫав юрра:

**Миниссаҫӑм, савнӑ Минисса,**
**Эп ҫӳрерӗм ҫут тӗнче касса,**
**Инҫетрен шӑпамӑр йӗррине**
**Ҫӑлтӑр пек эс тӑтӑн ҫутатса.**

**Миниссаҫӑм, шӑнкӑрти ҫӑлкуҫ,**
**Кӑмӑла уҫса пырас ҫулпуҫ,**
**Паянхи шӑпамӑр юррине**
**Юрлама ҫӑтмах пахчи эс уҫ.**

**Миниссаҫӑм, ырӑ хал-хавал,**
**Чӗрери телей те ӑрӑскал,**
**Ыранхи шӑпамӑр ҫырӑвне**
**Вулама пӗрле ыйтар халал…**

**Чунӑм, иккӗн чӗртнӗ кӑвайта**
**Сӳнтерме памастпӑр ҫич юта,**
**Юрату вӑл шанӑҫ, ӗненӳ,**
**Кӗрешӳ ҫулне уҫан чӗнӳ.**

**Эс те чухӑн хӗрӗ, Минисса,**
**Эп те ӳсрӗм чухӑн ҫын пулса.**
**Чыслӑ та сӑваплӑ пирӗн ӗҫ,**
**Ялтӑра кӗрешӳре, ҫут хӗҫ.**

**Эс мана ӑнланнӑ яланах,**
**Халь те сисрӗн ҫур сӑмахранах,**
**Татӑклӑн каларӑн: «Эпӗ те**
**Паянтан тӑратӑп сан рете.**

**Ҫапӑҫу…Унта пулать суран,**
**Юн юхсассӑн – кирлӗ ҫыхакан.**
**Ҫавӑнпа та хӗрсене пухса**
**Хыҫҫӑнах пыратӑп эп тухса.**

**Эс, унччен, Пайтулӑм, асӑрхан,**
**Турӑ та сыхлать асӑрхансан.**
**Пӑрӑнтӑр санран вӗри шӗнкрен,**
**Пӑрӑнтӑр санран хаяр ҫӗмрен.**

**Хӑлату та харсӑр ху пекех,**
**Чи чӑкраш ҫӗре чӑмать тӳрех,**
**Тархаслап: упранӑр, тусӑмсем,**
**Унсӑр татӑлаҫҫӗ ӗмӗтсем…»**

**Каччине пехиллӗ сунӑмпа**
**Хӗр ӑсатрӗ ырӑ туйӑмпа,**
**Халь тӗрленӗ пӗчӗк тутрине**
**Парнелетӗп, терӗ сых ятне.**

**Тек пӗрле пулатпӑр, Минисса,**
**Кӗтсе илӗп хирӗҫех тухса.**
**Куланай та хырҫӑ тӗнчинне**
**Хурҫӑпа хуҫатпӑр ӗнсине.**

*** * ***

## ВИÇÇĔМĔШ ÇИÇĔМ

*– Семка, эс Турра ĕненетĕн-и?*

*Семка ĕненнине çирĕплетсе пуçне сулларĕ.*

*– Хамăр тĕрĕс ĕç тунине ĕненетĕн-и? Ав, пачăшкă шавлать, Турра таптатăр, тет. Турра таптатпăр пулать…Мĕншĕн? Мĕнле майпа? Мĕн туса кӳрентеретпĕр эпир Турра. Эпир… хура халăх пурнăçне усалтан тасататпăр, – çирĕппĕн каларĕ Разин.*

*В. Шукшин,*
*«Я пришел дать вам волю» романран*

**Кнеç пулккисем, иккен, килсе те çитнĕ,**
**Часрах кĕрсе вырнаçнă Чĕмпĕре.**
**Çавах вăйпут çуртне йӳç тĕтĕм витнĕ,**
**Кантурсене те халăх çĕмĕрет.**
**Циркри канатçăсем пек улăхаççĕ**
**Пăлхавçăсем хула хӳми çине,**
**Çӳлтен вĕри сăмалапа сапаççĕ**
**Халь-халь каçас хăюллă яшсене.**
**Урса кайса аслатисем кĕрлеççĕ,**
**Куçа çиеççĕ вутлă çиçĕмсем,**
**Çĕн вăй-халпа тытăçăва кĕреççĕ**
**Сăрпа Сĕве енчен килекенсем.**
**Хӳме хапхисене çапать яш-кĕрĕм**
**Çĕмрен туса юман пĕренерен,**
**Ташлаççĕ çулăм, вилĕм, тĕтĕм-сĕрĕм**
**Чĕр тамăк чатăр карнă тӳперен.**
**Шывра пин-пинĕн ишнĕ пек вĕт пулă**
**Ухă йĕппи вĕçет хуланалла,**
**Ку вăрçăра кам паттăр, кам хăюллă,**
**Кам ячĕпе чул палăк лартмалла?**
**Пур йĕрекенĕ, пур ылханаканĕ,**
**Теприн сăмах чĕнме те çуккă хал,**
**Ăçта, ăçта эс, çĕнтерӳ хулканĕ,**
**Усал вăя лапчăтмалли сунтал?**

**Вăрçă çемми кăварлă та тăварлă,**
**Тутар, чăваш, ирçе кĕввисемпе**
**Тухать йĕтре пек вăрăнса хаяррăн**
**Çунать чунра вутланнă çиçĕм пек.**
**Тĕреклĕскер, çӳлевĕç евĕр çăмăл**
**Хăпарчĕ Раçăн вăрăм пусмапа.**
**Çапăçура хĕрсе шăраннă кăмăл**
**Кĕрейĕ-ши сăвва ман сăмахпа?**

**Пăхса илет – приказ парать пуль тейĕн,
Вăй çĕнелет, чĕре çунатланать,
Тăшман çине сикен эс аслатийĕн!
Хирĕç тăма вăл хăяймасть сана,
Мĕн-ма тесессĕн ĕçĕ унăн йăнăш,
Хăй тăванне тĕллет вăл пăшалпа,
Апла пулсан – туян, аман та йынăш,
Е ним чĕнмесĕр талкăш пуш алпа.
Тытăçура – чăн-чăн хĕм-çиçĕм Раçăн,
Çапăçăва туять, курать патвар:
– Маттур, Пайтул! Пĕрремĕш эсĕ каçрăн!
Анчах асту – пуçна çиме ан пар!**

**Паряттие ав хĕснĕçем хĕсеççĕ
Тан пек тапан Тани хусахĕсем,
Юнашарах – ирçе те мăкшă речĕ,
Малтан мала куçаççĕ тутарсем.
Эй, вăрçă! Чанклатать çĕмрен те пуртă,
Пакур та сенĕк чикĕшет кăна,
Хăрушă сасă! Нихăçан ан куртăр
Килес ĕмĕрсенче этем çакна.
Анчах мĕн тăвăн – пĕр туян ик вĕçĕ
Ялан хирĕçтерет-çке çынсене:
Пуяннисем чухăннине илтмеççĕ,
Хуçа тесе шутлаççĕ хăйсене.
Лешсем хуçашăн çурăмне аваççĕ
Ялан тертпе нуша асапĕнче,
Çапла тулса çитет те чăтăм вачĕ –
Вара каллех тăр-тăр чĕтрет тĕнче.
Çĕнеймесен те çуккисен пăлхавĕ
Укçаллисен тивет шута илме:
Танмарлăх – революцисен сăлтавĕ,
Вăл йыхăрать кĕрешĕве кĕме.**

*** * ***

**Çунать, йăсăрланать кĕлленнĕ Чĕмпĕр,
Выртать аманнă кайăк пек хула.
– Купса хапхи тăпсасăр, – тет Тутимĕр
Чăн арăслан пек хĕрнĕ Пайтула.**

**Пайтул хĕççи çут çиçĕмĕн вылярĕ
Пиншер пăшал та сенĕк хушшинче,
Вăл тăшмана пăрça пек ăшаларĕ
Тамăкрилле вĕри çатма çинче.**

**Çут пуçлă ахвитсер та авкаланчĕ**
**Ун аллинчен вĕçерĕнес тесе,**
**Анчах ун кĕлетки икке пайланчĕ,**
**Кучан пек кайрĕ пуçĕ вирхĕнсе.**

**Пайтул! тесе кăна тăрать ирçи те,**
**Пайтул! тесе пуçне таять тутар.**
**Пайтул сăмахĕ – тĕрĕслĕх пичечĕ,**
**Пайтул! Вăл – Турă янă пархатар.**

**– Çтаппан! Кимĕсене туртса илесшĕн! –**
**Халхавлăн евитлерĕç Раçăна.**
**– Кимĕсене памастпăр! – терĕ лешĕ, –**
**Эпир вĕсемсĕр – çап-çара çуна,**

**Братва! Хуллен çыран хĕрне анатпăр!**
**Ăçта эс, Ларька? – чĕнчĕ утаман.**
**– Кунтах эп! – сасă пачĕ Ларька паттăр, –**
**Халех çитетпĕр! Утаман, сыхлан…**

**Кĕçех Тани хусахĕсем тиенчĕç,**
**Пуçран аманнă Раçăна илсе**
**Часрах аналла ишме пикенчĕç**
**Эпир килетпĕр çĕнĕрен, тесе.**

**Каç сĕмĕнче лăпланчĕ Парятти те,**
**Виç пулккинчен çухатнăскер пĕрне,**
**Çапах та патшана – васкавлăн питĕ! –**
**Пĕлтерчĕ хулана паманнине.**

**Пайтул та вăрмана тухса вырнаçрĕ**
**Ятне яман чăваш çарĕпеле,**
**Лаштра юман айне ларса калаçрĕ**
**Хăй йышĕнчи çĕрпÿçĕсемпеле.**

**Питех те шел – çухатусем те пулчĕç:**
**Патвар Пайтурайпа маттур Ўсек**
**Чăваш шăпишĕн çапăçса пуç хучĕç,**
**Вĕсемпелех – такмакçă Исемпек…**

**Сăвап илнисене пуç тайнă хыççăн,**
**Тăратнă хыççăн тавраллах хурал,**
**Пайтул каларĕ татăклăн та уççăн:**
**– Туссем, нихçан та усăнмĕ çак ал.**

Çтаппан патша çĕн йыш пухса хăпарĕ
Тани енчен, Чарпа Самар енчен,
Килет, шанатăп! утаман хыпарĕ,
Эпир кунта йĕрке тăвар унччен.

Туссемĕр, эп хайларăм çĕнĕ юрă,
Тусамăр кăмăл итлесе пăхма,
Тепĕр чухне, екки ярсассăн, юрĕ
Вутра ĕшеннĕ чунсене уçма:

Пирĕн вăрман – сĕм вăрман,
Лашмансем хуçаланман.
Вăрман тулли – ват юман,
Эпĕр те пуçа усман.

Тăшман килсен хĕç тытнă,
Çичĕ юта юсанă,
Унтан хыçалтан тапнă,
Тамăкалла ăсатнă.

Пирĕн улăх сарлака,
Ан кай, тусăм, аякка.
Улăх тулли курăкĕ –
Чăваш çĕрĕн ырлăхĕ.

Вăрăм ешĕл курăкне
Çавапала çултăмăр,
Тăшман пуçĕ кучан пек,
Айпăлтапа касрăмăр.

Сĕве хĕрри юманĕсем тăнларĕç
Пайтулăн юррине тӳлек ларса,
Хушса юрланă евĕр каш кашларĕç
Пуçĕсене пĕр харăссăн тайса.

* * *

## ТĂВАТТĂМĔШ ÇИÇĔМ

*Хырла юхан шывĕ хĕрринче хусахсем, тутарсемпе чăвашсем, çармăссемпе ирçемăкшă çыннисем Ю. Борятинский вăйпут салтакĕсемпе çапăçăва кĕреççĕ.*

*П. Урусов вăйпут Хусан кĕпернин керменне 1670 çулхи юпа уйăхĕнче янă çыруран.*

**Миниссаçăм, Миниссаçăм,**
**Эс каçар мана, каçар, –**
**Юррăмра сана нумайлăх**
**Эп хăвартăм тăр пĕччен,**
**Ик куçу вĕри хĕм сапрĕ,**
**Калăн, вучахри кăвар,**
**Вирхĕнсе чĕрӳ те тапрĕ**
**Хĕр кăкрин читлĕхĕнче.**

**Икĕ вăй епле туллашрĕç**
**Урнă Чĕмпĕр тавралла,**
**Хĕрлĕ тĕслĕ çумăр çунăн**
**Юн пĕветрĕ Атăла,**
**Вăйлă тăвăл вăркăнтарнă**
**Капансен кĕлти пекех**
**Халăх, халăх выртса юлчĕ**
**Пĕтĕм сăрчĕ-тăвĕпех.**

**Миниссаçăм, пир тĕртӳçĕн**
**Килĕнте хĕл кунĕнче**
**Ăсаран эс тĕлĕнеттĕн**
**Ха, епле кумать, тесе,**
**Халĕ ху та, Миниссаçăм,**
**Çапăçу пăтравĕнче**
**Çав ăса пекех хутларăн**
**Тамăк çулĕн юппинче.**
**Санпала пĕрле хускалнă**
**Савнерпи те Пăрчăкан,**
**Тĕрĕс пурнăçшăн çĕкленнĕ**
**Нарпике те Путене,**
**Ыттисем те, пурте, пурте**
**Çыхрĕç хыпăнса суран,**
**Вилĕмрен çăлса хăварчĕç**
**Синкере лекнисене.**

**Аса ил-ха, Миниссаçăм,**
**Раçăн хăй те, амансан,**

**Тем самантлăх чупса пычĕ**
**Çыхтармашкăн урине…**
**Эй, этем! Суранлансан та**
**Йăлт курса тăрать таçтан,**
**Кăшкăрать: – Хĕветĕр, çавăр,**
**Çавăр тупă ушкăннне!**

**– Ларька, хыçалтан пыраççĕ,**
**Пăрăн сулахаялла!**
**– Леш енчен утсем анаççĕ,**
**Мишка, пулăш Пайтула!**
**Амансан та вут та çулăм**
**Сирпĕтет вăл вучахла,**
**Е упа пек талпăнать вăл,**
**Е çĕлен пек ывтăнать!**

**– Хороша, дивчина, – терĕ,**
**Счастья пусть Бог даст тебе, –**
**Çавăнтах кĕрсе те кайрĕ**
**Хĕç те пуртă хушшине,**
**Хăй çарне çĕн сулăм пачĕ**
**Ĕçĕпе, сăмахĕпе,**
**Кам уямĕ, кам итлемĕ**
**Çавăн евĕр патшине?**

**Минисса, туянчĕ Чĕмпĕр**
**Çапăçу кучченеçне,**
**Кирлĕ халь ăна çур ĕмĕр**
**Çĕнĕрен ураланма…**
**Э-э… Вĕсем хăйсем çĕклеç-им**
**Вăрçăсен йывăрăшне?**
**Хамăрах каллех кўлеççĕ**
**Чурара тапаланма.**

**Пăлхавсем хальччен те пулнă**
**Авалхи çĕршывсенче,**
**Мулçăсен шалчи те тулнă**
**Тытăçу вăхăтĕнче,**
**Тупăннă каллех пуянĕ,**
**Тупăннă укçа хуçи,**
**Юлнă куянах куянĕ,**
**Юлнă выçăллах выççи…**

**Минисса шутлать: «Тен, шанăç**
**Тĕтре евĕр сирĕлет,**

Тĕттĕмленнĕ евĕр анăç
Чун çути пĕтсе килет?
Çук, çĕрле те, кăнтăрла та
Манăн шухăш пĕр пекех,
Эпĕ чăнлăхшăн тăратăп
Хам савни Пайтул пекех.

Юрататăп, юрататăп,
Юрататăп эп ăна,
Тĕрĕс чунĕшĕн саватăп
Парăнма пĕлмен пуçа,
Ун тăшманĕ – ман тăшман халь,
Ăнланатăп Раçăна,
Хăйшĕн мар, пур халăхсемшĕн
Ирĕклĕх шыран çынна.

Ах, Пайтулăм, арăсланăм,
Асилме те вăтанап,
Тен, эп ухмахла хăтлантăм
Вăратса çĕркаç сана?
Чатăрта пĕччен выртаттăн,
Çывăраттăн эс çĕрле,
Питĕ, питĕ пулас килчĕ
Ман та санпала пĕрле.

Хуралтан ыйтса эп кĕтĕм,
Лекрĕм санăн ытамна…
Мĕн калас та, савнирен те
Çывăхрах халь эс мана.
Чунпа чун çапла пĕрлешрĕç,
Ыталанчĕç юнпа юн,
Сисрĕн-и, Пайтул, пиллерĕ
Йăл кулса пире çĕн кун…»

Миниссаçăм, çупăрлатăп
Иксĕре пĕр çупкампа,
Ăрăскал кăна сунатăп
Иксĕре пĕр туйăмпа.
Чим-ха, мĕншĕн çиçрĕ çиçĕм,
Кĕр кĕрлерĕ аслати,
Мĕн сунать пире, туссемĕр,
Аякри юман кати?

* * *

# ПИЛЛĔКМĔШ ÇИÇĔМ

*Кăрлачăн 2 – мĕшĕнче /1671 ç/ вăрă-хурах ялне Карайкассине кайрăм, унта çынсем те, выльăх-чĕрлĕх те, апат-çимĕç те çукчĕ. Вара эпĕ вăл яла тĕппипех çунтарса яма хушрăм.*

*М. КРАВКОВ полковник*
*Ю. Долгоруков вăйпут патне янă çыруран.*

**Каллех çапăçу-и? Каллех çапăçу!**
**Тăшман пуç çĕклет-тĕк – пулмасть çураçу.**

**Çуралнă эпир ултавпа тытăçма,**
**Çак çут тĕнчене усалтан тасатма.**

**Хăлатăмçăм, ыткăн, Хăлатăмçăм, вĕç,**
**Çĕклен çӳлерех, çĕнтерме панă хĕç.**

**Э-хей, кăйкăр йышĕ, э-хей, паттăр çар,**
**Кучан пуççене-и? Касса ывăтар!**

**Сыхлан, Борятинский, сыхлан, Парятти,**
**Çӳретĕн тек каçăрăлса, хур аçи.**

**Хĕн-хур та нуша тӳсекен халăха**
**Каллех пăшалпа хăвалан тамăка.**

**Камсем ирĕк панă кулма чăвашран?**
**Камсем ирĕк панă кулма тутартан?**

**Мĕн-ма хĕсĕрлеççĕ мăкша, ирçене,**
**Мĕн-ма хĕсĕрлеççĕ Акпарс халăхне?**

**Кашни халăх хăй йĕркипе пурăнать,**
**Кашни халăх хăй шăпипе юп курать.**

**Камсем иртĕхеççĕ? Укçаллă çынсем,**
**Çук çын ĕçĕпе мул пухаççĕ вĕсем.**

**Мула, укçана хӳтĕлет Парятти,**
**Долой ун карттусĕ те çутă атти!**

**Çапла шухăшлать пирĕн паттăр Пайтул,**
**Мала вирхĕнет пĕрхĕт евĕр Пайтул.**

**Тутимĕр Ямай та унпа юнашар,**
**Ахтимĕр Карай та унпа юнашар.**

**Унпа халăх çарĕ, унпа Минисса,**
**Эпир лармалла-и текех пуç усса?**

**Пайтул ыткăнать Хырла шывĕ хĕрне,**
**Унта Борятинский йĕрлет ун йĕрне.**

**Ак хирĕç, вар тăрăх, килет Куç-хăлха.**
**– Ăçта вĕсем?**
**– Йышăннă çав сăртлăха.**

**– Апла тăк – çапар вĕсене хыçалтан,**
**Сикер те тухар пач кĕтмен вырăнтан.**

**Шăв-шавсăр Пайтул çывхарать айлăмпа.**
**Переймĕ тăшман çывăхран тупăпа.**

**Ак çитрĕ самант! Çĕмренле малалла**
**Хăлат вĕçтерет парăнми Пайтула.**

**Çиçет çутă хĕç тăшман пуçĕ çинче,**
**Тăшманĕн карттусĕ – Хырла хумĕнче.**

**Тутимĕр Ямай авă ик салтака**
**Çапать пуçпа пуç – çурăлать ик çамка.**

**Ахтимĕр Карай та пăшал штыкĕпе**
**Капмар капрала танлаштарнă çĕрпе.**

**Чим, снайпер тĕллет хыçалтан Пайтула,**
**Хырла шывĕпе ăсатар явăла!**

**Шутланă та – тунă. Ав снайпер юхать,**
**Кĕçех Сĕвепе Атăла вăл тухать.**

**Ун килĕ ларатчĕ Сĕве хĕрринче,**
**Шыва тинкеретчĕ хăрах чӳрече.**

**Пулмарĕ килне укçапа килесси,**
**Шăпа тăрăх тухрĕ çапла вилесси.**

**Хаяр çапăçу çухатусăр пулмасть,**
**Çĕре выртрĕ курăк. Ун тĕсĕ хăмач.**

*** * ***

**Хресчен тарăхни çулăма çаврăнать.**
**Çуллать халь çав çулăм мĕнпур таврана.**

**Кĕлленнĕ Улатăр, Пăва та çунать,**
**Ав Кăрмăш çути те таçтан курăнать.**

**Чунтан тухнă çилĕ хаяр та кăра.**
**Тарать, пытанать халь тӳре те шара.**

**Вĕçет ял-ял çийĕн Пайтул юпăнчи,**
**Вăл – вутлă элем, кĕрешӳ йыхравçи.**

**Каçал та хĕмленнĕ, çунать Шăхасан,**
**Хăçан, мул хуçийĕ, шăпу тулĕ сан?**

**Çĕклет Янтуша ак Тутимĕр Ямай,**
**Чурачăк тапранчĕ хура халăх май.**

**Тулать, татăлать тăвăлланнă пĕве,**
**Пăлхавăр вĕренĕ пăвать Çĕрпĕве.**

**Тĕп пултăр хуçа та тĕп пултăр вăйпут,**
**Эй, пусмăр тĕнчи, Атăла эсĕ пут!**

**Пайтул йышĕ пысăк, Пайтул вăйсăр мар,**
**Çĕршер çамрăк тăчĕ унпа юнашар.**

**Имен те Алманчă, Упи те Тусай…**
**Сана асапран хăтарасчĕ, Карай.**

**Хĕл ларчĕ. Кĕçех çывхарать сурхури.**
**Янрать таврара ирĕк пурнăç юрри.**

**Кантур та текех пуçтармасть куланай,**
**Аванччĕ малаш сулăнсан çавна май.**

**Эрнелĕх кайсаччĕ ялне Минисса,**
**Килте мĕнлине килем терĕ пăхса.**

**Пĕр виç кун пек иртрĕ. Çĕрле, васкавар,**
**Ялтан килсе çитрĕ хăрушă хыпар.**

**«Пайтул, Минисса салтаксен аллинче,**
**Тăрать салтак йышĕ Чулкаç ялĕнче.**

**Пуян Элекки элекленĕ иккен…**
**Лешсем лартса кайнă никам сисиччен…»**

**Халхав!**
**Çĕр утçа вăратса ыйхăран**
**Юр витĕр вĕçтерчĕ Пайтул-арăслан.**

**Çитес çĕре çитрĕ Пайтул-арăслан,**
**Хăлачĕ кĕçенчĕ кĕрсен хапхаран.**

**Пайтул парăнтарчĕ салтак ушкăнне,**
**Пуçтарчĕ те илчĕ хĕçне-пăшалне.**

**– Ăçта Минисса?**
**– Офицер патĕнче.**
**– Ăçта офицерĕ?**
**– Сутуç çуртĕнче.**

**Поручик хăтланчĕ малтан хирĕçме,**
**Сасартăк ăнланчĕ – май çук çĕнтерме.**

**Шăпах çак çынна вăл йĕрлет виçĕ çул,**
**Ак тыт ĕнтĕ халĕ – хăй килчĕ Пайтул.**

**Пайтул!**
**Куçĕнче йăлкăшать шĕл кăвар,**
**Чăн-чăн арăслан ку… Эй, Турă, хăтар!**

**– Ăçта Минисса?**
**– Ав, чăлан хыçĕнче…**
**Вăл наркăмăш çăтнă эпир сисиччен…**

**– Ахтимĕр, çыхар халлĕхе ку йытта,**
**Пуян Элекки те кĕç пулĕ кунта!**

**Кăна çыхса хучĕç.**
**– Тухсам, Минисса!**
**Савниййĕ тухмарĕ çил пек варкăшса,**

**Шăнкрав сассипе хушаймарĕ сăмах,**
**Çиçмерĕ нар пек питĕнче ик ахах…**

**Ик каччă уçать те чăлан алăкне –**
**Курать – çак çĕлен илнĕ унăн чунне.**

**Пайтул пӗшкӗнет савнӑ хӗрӗ патне,**
**Ачашшӑн ҫӗклет сывламан ҫунатне:**

**– Ҫапла эп ҫухатрӑм-ши, тусӑм, сана…**
**Уяр аҫи ҫаптӑр кун хыҫҫӑн мана!**

*** * ***

**Ак килчӗҫ тытса Элекки пуяна.**
**Поручик ҫумне кӗҫ тӑратрӗҫ ӑна.**

**Унтан илсе тухрӗҫ Чулкаҫ вӑрманне.**
**Унтах ертсе пычӗҫ салтак ушкӑнне.**

**Автарчӗҫ антарчӗҫӗ ик хурӑна,**
**Тӑррийӗсем лекрӗҫ шӑп пӗр вырӑна.**

**Пӗр йывӑҫ ҫинче – Элеккин пӗр ури,**
**Теприйӗн ҫинче – унӑн тепӗр ури.**

**Ҫапла ҫыхса лартрӗҫ касмак ҫыхӑпа.**
**Пуян ҫухӑрать сысналла сасӑпа.**

**Пайтул ҫакӑнта сӑмахне калани –**
**Вут чуль кӑвайтра сикнӗ чух шартлатни:**

**«–Халь – ху айӑпна ӑнланан пуль, услап, –**
**Паян Миниссашӑн тытатӑн явап».**

**Ӑсан пек ҫӗкленчӗ ик хурӑн тӑрри,**
**Кашнин ҫумӗнчех – Элеккин пӗр ҫурри.**

**Шӑп ҫак меслетпе – хӗллехи аслатин –**
**Ӑсанчӗ ҫӳле офицер хуспутин.**

**Чун витӗр ҫакна кӑларуҫӑн йӑлтах**
**Пайтул енне куҫрӗ шӑп аллӑ салтак.**

**Мӗнпур йышпала Минисса йӑмӑка**
**Пытарчӗҫ Карай ҫӑвинчи пумӑка.**

**Ҫынсем асӑрхарӗҫ кайран, ирхине:**
**Шап-шурӑ пас тытнӑ Пайтулӑн пуҫне.**

*** * ***

## УЛТТĂМĔШ ÇИÇĔМ

*Сирĕн, хура халăхăн, Çĕрпĕве хӳтĕлеме каймалла мар, мĕншĕн тесен сире унта улталаса пухаççĕ те хăвăра касса ваклаççĕ.*

*С. Разинăн*
*1670 çулхи авăн уйăхĕнчи йыхравĕнчен.*

**Пĕччен çын пĕччененле шухăшлать, йыш çинчи çын йыш майлă шухăшлать.**

**Пайтул çумĕнче яланах çĕршер çын çӳрет, хăш чухне пинрен те иртет. Хĕрĕх Сутак ялĕ патĕнче, ав, виçĕ пин урлă та каçнăччĕ, Чĕмпĕр çапăçуне унтан та ытларах хутшăннăччĕ.**

**Халăхăн хăйĕн кăмăлĕ, хăйĕн çăмăлĕ. Пĕрлехи ĕçре ăна лайăх пуçлăх кирлĕ, халăх вăй-халĕ хӳхĕм пуçлăхпа вирлĕ.**

**Эсĕ ертӳçĕ пулсан, пĕтĕм яваплăха ху çине илтĕн пулсан, сан çав йыша тĕллевне те памалла, кирлĕ чухне тĕревне те лартмалла.**

**Сĕм вăрман каш та каш кашлать, пирĕн Пайтул шухăш шухăшлать. Ĕнтĕ Хырла шывĕ патĕнче те, ирçе-мăкшă тăрăхĕнче те Паряттисене аванах лăскарăмăр, чĕн йĕвенлĕ Чĕмпĕрте те вăйлах тустартăмăр, анчах пусмăр тытăмне тĕппипех кăклаймарăмăр, Мускав патшине ылтăн ларкăчĕ çинчен çапса антараймарăмăр.**

**Пуянни пурпа иртĕнет, çукки çукпа хĕсĕннĕçемĕн хĕсĕнет. Ăçта эсĕ, тĕрĕслĕх, ăçта эсĕ, ирĕклĕх? Вĕсене шырама тух кăна – тӳрех сăнчăрлаççĕ сана. Мĕн чухлĕ маттура ристан çулĕпе ăсатрĕç, мĕн чухлĕ чăваша çапса ватрĕç, ман Миниссан пурнăçне чыссăррăн татрĕç. Эх, самана, çил уççинчи такана!**

**Çĕклен, Пайтул! Ăмăрткайăк пул, Пайтул!**

**Сиккипе каллех Куç-хăлха анать,**
**Хыпарне часрах пĕлтерме васкать:**
**– Шупашкар енчен пысăк çар килет,**
**Ишекре паян çĕр каçаççĕ тет,**
**Çурçĕрсем иртсен тапранаççĕ тет,**
**Çутăлсан пире хупăрласшăн тет.**
**Пулккинчи вăйпут Кравкух ятлă тет,**
**Пайтула хăйне тытас халлă тет.**
**Ыттине ыран пĕлтеретĕп тет,**
**Шуçăмлах хыпар çитеретĕп тет.**

**Çийĕнчех Пайтул пуçтарать канаш,**
**Вăрттăн калаçать çич маттур чăваш:**
**Ан кĕрин сăмах çич ют хăлхине,**

**Ан пĕлин Кравкух Пайтул шухăшне.**
**Тусай ен çулне йышăнать тĕп вăй,**
**Тĕп вăй пусĕнче Пайтул пулĕ хăй.**
**Кашмаш ушкăнне Сурăм вăрманне**
**Тăратма шутлать Пайтул сых ятне,**
**Салтаксем иртсен аслă çулпала**
**Унăн хыçалтан вут кăлармалла,**
**Кĕтмен вырăнтан пырса çапмалла.**

**Çил ачи-пăчи шурă çип арлать,**
**Карайра кăрлач кăралпа карлать:**
**Ир-ирех хыпар çитрĕ ялсене, –**
**Кравкух çитнĕ-мĕн Шетмĕ улăхне.**
**Пысăк çар килет, тупăпа перет,**
**Тенине илтсен халăх çĕкленет,**
**Ваттипе вĕтти аякка тарать,**
**Вăйпитти арçын Пайтулпа тăрать.**

**Параппан çапса, ав, килет Кравкух,**
**Параппан калать: «Кам пăлхавçă – тух!»,**
**Ак пăшал сасси. Халăх вăрмантан**
**Ыткăнса тухать тăвăлпа пĕр тан.**
**Хăшĕ шăчăпа, хăшĕ пуртăпа,**
**Хăшĕ сенĕкпе, хăшĕ хăртăпа**
**Тапăнса кĕрет салтаксен ретне,**
**Çĕмĕрет, хирет салтаксен ретне.**
**Çĕмренпе пĕрех вирхĕнет Пайтул,**
**Çиçĕмле çиçет ун пăлат хĕççи,**
**Пурччĕ, тет, салтак, халĕ çуккă пул,**
**Тĕттĕм тĕнчере ĕнтĕ ĕç те çи…**

**Çапăçать Ямай, çапăçать Карай,**
**Паттăрсем валли ĕç ялан нумай,**
**Хыçалтан çапать тăшмана Кашмаш,**
**Пусмăра аркат, парăнми чăваш!**
**Ик сехет пырать юнлă çапăçу,**
**Улт сехет пырать харсăр тытăçу,**
**Пăлхава çапах чараймасть Кравкух,**
**Хăй йышне нумай çухатать Кравкух.**

**Каç енне Пайтул Юнтапа хыçне**
**Çавăрса кĕрет парăнми йышне.**
**Йывăр килчĕ кун, шăрăх пулчĕ кун,**
**Пăхрĕ те Пайтул – тăвăрланчĕ чун:**
**Юнлă вăрçăран, урнă вăрçăран**

Тухайман паян, тухас çук ыран
Чи маттур туссем, ытарми çынсем,
Ачаран пĕрле ӳснĕ тантăшсем,
Çывăх тăвансем Карайпа Кăлпай,
Вĕсемпе пĕрлех Пайкăспа Чулпай,
Юнтапа ачи Атăлкка Атай,
Чутайсем Элмень, нурăссем Чурпай,
Тусайсем Палтай, танăшсем Курак,
Яманак ачи паттăр Арăслан,
Кăмакал каччи Ахтупай Аслан,
Синерсем Арлан, иштексем Урак…
Тата ыттисем, тата ыттисем.
Канлĕ çывăрăр, хаклă тăвансем,
Канлĕ çывăрăр, паттăр тусăмсем, –
Эп усал йăха малалла хирем.

* * *

Кăшт канас тесе, вăй илес тесе,
Тутимĕрпеле шут тăвас тесе
Юнтапа пӳртне кĕнĕччĕ Пайтул,
Тухăçран хуллен çывхаратчĕ тул.
Ак хайхи: пӳрте илчĕç çавăрса,
Хулран хул салтак тăчĕ тытăнса.
Хытарать асли: «Юрамасть пеме,
Хушнă Мускава илсе çитерме!»
Лăпкăн тухакан ик утамана
Тăшмансем сырса илнĕччĕ кăна –
Çитрĕç вĕçтерсе хамăр ачасем,
Лекрĕç тыткăна салтаксем хăйсем.

Килнĕ хресченсем Нурăс леш енчен,
Турханпа Хутар тенĕ ялсенчен.
Лартрĕ те пырса хуçине Хăлат
Уялла тухса хушрĕ вăл çунат.
Çутăлса çитсен Пайтулсен ялне,
Çав Кравков вăйпут, тарăхнă енне,
Çунтарса ярать пĕр кил юлмиччен,
Хăй пăхса тăрать кĕлĕ вĕçиччен.

* * *

## ÇИЧЧĔМĔШ ÇИÇĔМ

*Пайтул – пирĕн халăхăн чапĕ. Пайтул – пирĕн халăхăн мухтавĕ. Вăл чăнласах та пирĕн историри чи чаплă та чи çутă çичĕ çăлтăртан чи чапли, чи çутти.*

*ЮХМА Мишши*

Атăлах та атте хĕрринче,
Чăнкăях та çыран тăрринче,
Ватăях та юман айĕнче
Пайтул тăрать хĕвел çутинче.

Пĕвĕпе – сăрт-ту пекех кĕрнек,
Сăнĕпе – асамлă улăп пек,
Ик алли – хăлат çуначĕ пек,
Чунĕнче – çил авайми тĕрек.

Кăмăлĕ ун – уçă та кăра,
Пăлат хĕç пек çивчĕ сăмахра,
Хăй хайланă хўхĕм сăвăра,
Хăй юрланă чаплă юрăра.

Аллине çунат пекех сарса,
Сăмахне пăта пекех çапса,
Витерсе калать вăл сăввине,
Чĕрере шăраннă кĕввине:

Йĕр йĕрлерĕç виçĕ кун,
Хăваларĕç çичĕ кун.
Тытатпăрах терĕç пуль,
Çакатпăрах терĕç пуль.

Пире часах тупас çук
Сĕм вăрмансем пур чухне,
Пире вăйпут тытас çук
Пăши ури пур чухне.

Хупăрларĕç çичĕ хут,
Çапăçрăмăр виçĕ кун.
Çĕмĕртĕмĕр терĕç пуль,
Пĕтертĕмĕр терĕç пуль.

Пире улпут çĕнес çук
Алра вут-хĕç пур чухне,
Пире никам çĕнес çук
Алра çĕмрен пур чухне.

**Атӑл атте итлет Пайтула,**
**Ҫӗр аннемӗр итлет Пайтула,**
**Хура вӑрман итлет Пайтула,**
**Сенкер тӳпе итлет Пайтула.**

**Атӑл атте хумханать: – Пехил.**
**Ҫӗр аннемӗр сас парать: – Пехил.**
**Хура вӑрман таййӑлать: – Пехил.**
**Сенкер тӳпе усӑнать: – Пехил.**

**Хӗвел сӑмах хушать: – Ывӑлӑм...**
**Уйӑх кӗмӗл сапать: – Паттӑрӑм...**
**Пайтулӑмӑр юрлать юррине,**
**Вутлӑ чӗре витӗр тухнине:**

**Эй, ҫилсем, кӑра ҫилсем,**
**Ӑҫта кӑна ҫитместӗр:**
**Атӑл ҫинче вӗҫетӗр,**
**Шур хумсене йӗрлетӗр,**
**Кимӗсене силлетӗр.**

**Эй, ҫилсем, кӑра ҫилсем,**
**Ҫунатӑма сарӑттӑм,**
**Сирӗнпеле пырӑттӑм,**
**Атӑла ал парӑттӑм,**
**Ҫавала ыталӑттӑм.**

**Эй, ҫилсем, кӑра ҫилсем,**
**Вӑйлӑ, ирӗклӗ ҫилсем,**
**Ма хӑш чух йӗретӗр-ши,**
**Канӑҫа сиретӗр-ши,**
**Чунӑма илетӗр-ши...**

**Кайӑк пек каять Пайтул сасси,**
**Йӑлӑма ҫитет Пайтул сасси,**
**Вӑрмана кӗрет Пайтул сасси,**
**Ирӗклӗх шырать Пайтул сасси.**

**Вӑшӑл ҫил лӑпкать Пайтул пуҫне,**
**Йӑрӑ хум чупать Пайтул енне,**
**Ҫут шевле ӳкет Пайтул ҫине,**
**Шур чарлан анать Пайтул умне...**

*** * ***

**Куç-хăлха евичĕваскавар:**
**– Утаманăм, пĕлтерем хыпар.**
**Шупашкар вăйпучĕ, çут янах,**
**Тĕл пулса пуплесшĕн паянах.**

**Хĕç-пăшалсăр-мĕнсĕр… Пĕчченшер…**
**Кăнтăр тĕлĕнче. Мĕнле – пĕлтер.**
**Шухăш çавăрсассăн пĕр самант**
**«Килĕшетĕп» терĕ утаман.**

*** * ***

**Кăнтăр тĕлĕ. Аслă çул çинче**
**Виçĕ шурă хурăн айĕнче**
**Курнăçрĕç вĕсем. Пĕри – Пайтул,**
**Çутă тӳмелли, тепри, – вăйпут.**

**– Ну-с-с, – тет çарăç. – Хăш чĕлхепеле**
**Калаçар эпир сирĕнпеле?**
**– Суйлăр хăвăр, – тет Пайтул. – Капла**
**Маншăн çывăхрахчĕ чăвашла.**

**– Шел те, пĕлейместĕп чăвашла.**
**– Пуплĕпĕр апла тăк, тутарла,**
**Кĕпĕрне хулийĕн чĕлхине**
**Тен, вăйпут пĕлет-тĕр, ахăртнех?**

**– Çук, памарĕ Турă вăл енчен:**
**Иртеймерĕм вырăс чĕлхинчен.**
**– Маншăн вырăсла та пит аван,**
**Çывăх та тăван вăл ачаран.**

**– Тавтапуç, Пайтул. Эппин, пуçлар.**
**Ал парса евитлĕн паллашар…**
**Алă пачĕç куçран куç пăхса,**
**Ячĕшĕн-ши, илчĕç йăл кулса.**

**– Манăн, – терĕ Пайтула вăйпут,–**
**Çакăн пек сĕнӳ пур, пĕреххут:**
**Çывăх çын пулса сăмахăма**
**Тӳрренех пуçлам-ха калама.**

**Эп сана чылайранпа сăнап,**
**Ăс-хална, хăюлăхна мухтап.**
**Килĕш, ывлăм, ман çума ларма,**
**Хулари çар ертӳçи пулма…**

**– Шупашкар салтакĕсен хуçи?**
**Пысăк вырăн, питĕ пысăк чин.**
**Пурпĕр сĕнĕве те сунăма**
**Эп пултараймастăп йышăнма.**

**Унашкал ят-сумлă чиншăн мар**
**Вутланать яш чунăмра кăвар.**
**Манăн халăха эс ирĕк пар,**
**Асапра вăл ан юхтартăр тар.**

**Кам тăвать пур ырлăх-пурлăха?**
**Халăх! Паллă ку яланлăхах.**
**Апла мĕншĕн пурнăç хăймине**
**Уйăрса илетĕр унăнне?**

**Хĕвелне те, май килес пулсан,**
**Çук çынна кăтартмăттăр нихçан,**
**Сывлăшне те памăттăр ăна,**
**Усрăттăрччĕ сĕрĕмре кăна.**

**Чĕлхипе юрри-ташши тесен**
**Сирĕншĕн вăл юрăхсăр иккен,**
**Çĕрĕк тислĕк пек хырса тăкма**
**Эсир хатĕр ман халăхăма.**

**Пĕл, вăйпутăм, пĕлтĕр çут тĕнче,**
**Эп тăратăп ун хуралĕнче.**
**Сывă пул эппин, вăйпут пичче,**
**Çĕн çапăçура хĕç тытиччен!**

*** * ***

**Çапăçать Пайтул, кĕрешет Пайтул,**
**Хĕрлĕ çулăм пек вĕлкĕшет Пайтул,**
**Хĕн-хура сирме,**
**Пусмăра хирме**
**Ултава çĕнме йыхăрать Пайтул.**

**Ак Çавал енче, Сĕнтĕрсем енче,**
**Шуршăлсем енче халăх тăчĕ кар.**
**Кам ун пуçĕнче**
**Аслă йыш çинче?**
**Кам, паллах, Пайтул, усăнми чукмар.**

**Чавтарать Хăлат, ыткăнать Хăлат,**
**Чи вĕри çĕре вирхĕнет Хăлат,**

**Урипе тапса,**
**Пуçĕпе çапса**
**Пайтулпа пĕрлех çапăçать Хăлат.**

**Парăнать тăшман, ывтăнать кучан,**
**Ывтăнать кучан, сирпĕнет кăшман.**
**Килĕр, хресченсем,**
**Пурлăх илĕрсем:**
**Тырă, аш-какай, кĕрĕк те сăхман…**

**Тем килет лерен, сĕм вăрман енчен,**
**Шăхăрать çинçен… Чимĕр, ку – шĕнкрен!**
**Пайтул усăнчĕ,**
**Пайтул авăнчĕ,**
**Анчĕ шăвăнса шурă ут çинчен…**

**Кĕçенет Хăлат, хартлатать Хăлат,**
**Ик ури çине çĕкленет Хăлат,**
**Ăнлансам, Хăлат,**
**Лăплансам, Хăлат,**
**Сывлами выртать сан хуçу, Хăлат.**

**Çулласа илет хуçине питрен,**
**Уялла тухса вирхĕнет йĕтрен…**
**Эх, Хăлат, Хăлат,**
**Ывăнми çунат,**
**Эс паян пире куççульпех йĕртен.**

**Эй, Янтуш ачи, эй, Тутимĕрĕм,**
**Тӳпене ан пăх пурнăç тилмĕрнĕн,**
**Тăрас çук Пайтул,**
**Вĕçес çук Пайтул**
**Вут та хĕм сапса Чарăн-Чĕмпĕрĕн.**

**Уçăлать хуллен çĕрĕн алăкĕ,**
**Пухăнать кунта Пайтул халăхĕ,**
**Вирьялтан килет,**
**Анатран килет, –**
**Ту пулса ларать Пайтул палăкĕ.**

**Çывăр канăçлăн, халăх паттăрĕ,**
**Сан ятна чăваш асăнсах тăрĕ,**
**Атăлпа пĕрле,**
**Çĕр-шывпа пĕрле**
**Тăвĕ чыс-хисеп Шуçăм çăлтăрĕ.**

* * *

**Эй, яшсем, тӑрар, алран ал тытар,**
**Эй, хӗрсем, тӑрар, алран ал тытар,**
**Сӑввине калар,**
**Ташшине ташлар,**
**Паттӑрсен ятне юрӑра мухтар.**

**2009 ҫул,**
**ҫӗртме-авӑн.**

## ТУПМАЛЛИ

Çиччĕ сăваплăхне пуç тайни........................................................... 2

Пĕрремĕш çиçĕм................................................................................ 6

Иккĕмĕш çиçĕм.................................................................................. 16

Виççĕмĕш çиçĕм................................................................................ 23

Тăваттăмĕш çиçĕм.............................................................................. 27

Пиллĕкмĕш çиçĕм.............................................................................. 30

Улттăмĕш çиçĕм................................................................................ 35

Çиччĕмĕш çиçĕм................................................................................ 38

Юрий Семенович Семендер

# ПАЙДУЛ

Песня семми молний

Стихи на чувашском языке

Чебоксары, 2009